СПОРТ

# Шанчăка тӳрре кăларчĕ

## Андрей Сюмайкин саккунлăха, обществăри йĕркелĕхе сыхлас тĕлĕшпе ырми-канми тăрăшать. Ахальтен мар вăл пилĕк хутчен патшалăх наградисене илме тивĕçнĕ

**Тӳрĕ чунлă, яваплă, хастар çынсем тăван тăрăха чап кӳреççĕ. Акă Анаткас Хапăсри Андрей Сюмайкин çамрăк пулин те ят-сум çĕнсе илме ĕлкĕрнĕ.**

**Андрей Хапăсри вăтам шкулта кĕçĕн классенче вĕреннĕ чухнех Михаил Павлович Павлов тренер ертсе пыракан секцие çӳренĕ. Ăсталăхпа, хастарлăхпа палăрса тăракан каччă хăвăртах çăмăл атлетика енĕпе район чемпионĕ, йĕлтĕрпе чупса республика призерĕ пулса тăнă. 9-мĕш класра ăс пухнă чух йĕлтĕрçĕсен марафонне хутшăнса çитĕннисен пĕрремĕш разрядне пурнăçланă.**




2000 çулта çамрăкăн салтак аттине тăхăнма тивет. Вăл Сывлăш-Десант çарĕнче службăра тăрать.

Андрей Сюмайкин Чечняра пĕрре мар пулнă. Çĕр-шыв умĕнчи таса тивĕçе çӳллĕ шайра пурнăçланăшăн ăна пилĕк хутчен патшалăх наградипе чысланă. Андрей Сюмайкин хальхи вăхăтра Шупашкарта саккунлăха, обществăри йĕркелĕхе сыхлас ĕçре вăй хурать. Тӳрĕ кăмăлпа тăрăшнă вăхăтрах спорт ăмăртăвĕсене хастар хутшăнать. Вăл ĕçтешĕсем хушшинче дзюдо енĕпе ăмăртса республика чемпионĕ пулса тăнă. Андрей Сюмайкин спортăн ытти тĕсĕсенче те маттур, малти вырăнсем çĕнсе илет. Кăçал Тăван çĕршыв хӳтĕлевçин кунне халалласа иртнерĕ Вăрнарти ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн тата «Химик» спорт клубĕн уçă турнирĕнче хăйĕн виçе категорийĕнче пуринчен тĕреклĕ пулнине çирĕплетнĕ. Анаткас Хапăс каччи вырттса 155 килограмлă штанга çĕклеме вăй çитернĕ, абсолютлă чемпион пулса тăнă.

Ĕмĕр пурăн, ĕмĕр вĕрен тенине асра тытса хастар çамрăк пĕлĕве милицин аслă шкулĕнче тарăнлатать.

– Андрей Сюмайкин шанчăка тӳрре кăларче. Вăл пултаруллă çамрăк, этемлĕх тивĕçлĕхне çӳле çĕклет. Сывă пурнăç йĕркине çирĕппĕн пăхăнса пурăнать, яш-кĕрĕмпе хĕр-упраçа ырă тĕслĕх кăтартать, – терĕ ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн Хапăсри филиалĕн ертӳçи Михаил Павлович Павлов.

Андрей Сюмайкин пушă вăхăта усăллă ирттерме тăрăшать. Тăван тăрăхри çамрăксемпе, вырăнти секцие çӳрекенсемпе тĕл пулусем йĕркелет, вĕсене спортпа тачăрах çыхăну тытма вĕрентет.

**Е.ТИКИНЕВА.**

# Раççей призерĕсем

**Апрель пуçламăшĕнче Чулхула облаçĕнчи Арзамас хулинче СССР спорт мастерĕн В.Голышевăн парнисене çĕнсе илессишĕн ирĕклĕ майпа кĕрешессипе иртнĕ Пĕтĕм Раççейри турнирта Вăрнар çамрăкĕсем тăватă бронза медаль çĕнсе илнĕ.**

Пăртасри вăтам шкулта вĕренекен Николай Галкинпа Григорий Семенов кĕрешӳ вăрттăнлăхĕсене кĕске вăхăтрах алла илнĕ. Вĕсем ăсталăха куллен Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ тренерĕ, тĕнче призерĕсене хатĕрленĕ Виталий Петрович Трофимов патĕнче ӳстереççĕ.

Юрий Григорьевич Львовăн воспитанникĕсем те кашни турнирта лайăх результатсем кăтартаççĕ. Хальхинче акă ял хуçалăх техникумĕнче вĕренекен Евгений Ананьевпа Кĕçĕн Кипекри вăтам шкулта вĕренекен Сергей Кириллов бронза призерсем пулса тăнă.

Иртнĕ канмалли кунсенче вара кĕрешӳçĕсем легендарлă çар пуçне В.И.Чапаева асăнса иртнерĕ турнирта палăрнă. Унта Раççейĕн тĕп хулипе тĕрлĕ регионĕсенчи 120 ытла вăйлă спортсмен хутшăннă. Арçынсем медальсемшĕн – сакăр, хĕрарăмсем çичĕ виçе категорийĕнче тупăшнă.

Вăрнарти ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн вĕренекенĕсем район чысне ăнăçлă хӳтĕленĕ. Ирина Львова – иккĕмĕш, Алексей Уткин виççĕмĕш вырăнсене йышăннă.

# Йĕлтĕр хывман-ха

Çуркунне вăраха тăсăлни кăçал йĕлтĕрçĕсен сезонне те тăсма май пачĕ. Апрелĕн малтанхи кунĕсенче акă вĕсем дуатлон енĕпе Чăваш ен Кубокĕн виççĕмĕш тапхăрĕнче мала тухассишĕн ăмăртрĕç.

Вăрнарти ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн тренер-преподавателĕ Юрий Тикинев ертсе пыракан команди те унта хăйĕн вăйне виçнĕ. Вăрнарти 1-мĕш вăтам шкулта вĕренекен Ирина Тикинева 10 километра виççĕмĕш результатпа вĕçленĕ. 2-мĕш шкулта вĕренекен Александр Романов 20 километра пиллĕкмĕш, ял хуçалăх техникумĕн студенчĕ Иван Васильев вуннăмĕш чупса тухнă.

# Кам çивĕчрех?

**Кăçалхи паллă событие – этем космоса вĕçнĕренпе 50 çул çитнине – спортсменсем те чылай мероприятие халалларĕç.**

Иртнĕ шăмат кун акă çак ятпа Вăрнарти физкультурăпа спорт комплексĕнче сĕтел çи теннис енĕпе турнир йĕркеленĕ. Ачапăча пултарулăх çурчĕ, хутăш препаратсен завочĕ тата ял хуçалăх техникумĕ икшер команда тăратнă. Çавăн пекех ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн, «Хирпоси», «Надежный», Хапăс, Кульцав ялĕсен командисем килсе çитнĕ.

Хĕрӳ тупăшура хирпуçсем çĕнтернĕ. Командăра – Д.Феофанова, А.Николаев тата В.Феофанов. Ача-пăча пултарулăх çурчĕн 1-мĕш команди (Н.Канькина, Д.Ергаев тата В.Калинников) – кĕмĕл, заводăн 1-мĕш команди (Н.Степанова, С.Николаев тата Ю.Ефимов) бронза призерсем пулса тăнă.

**С.ЧИКМЯКОВА.**

# Административлă ĕç пуçарнă

**Поселокри пĕр урамра санкцилемен çӳп-çап купи туса хуни çинчен Вăрнарта пурăнакансем пĕлтернипе район прокуратури тĕрĕслев ирттернĕ.**

ПРАВО

Палăртнă тăрăх, Вăрнарта Апнерка тата Мелиораторсен урамĕсем хĕресленнĕ вырăнта, Мелиораторсен урамĕнчи 55-мĕш çуртран 20–25 метр аякkарах, чăнах та свалка тунă, унта йăлари тата строительство çӳп-çапне пăрахаççĕ.

Йĕркене пăснă ку тĕслĕхпе район прокуратури Вăрнар хула поселенийĕн администрацийĕн пуçлăхĕ В.Малицкий тĕлĕшпе административлă ĕç пуçарнă.

**Ю.КАЗАКОВ,**
**Вăрнар район прокурорĕн помощникĕ.**

# Çурт та вăрçтарать

СУД ТЕНКЕЛĔ ÇИНЧЕ

Çурт-йĕр ыйтăвĕ тăвансене те вăрçтарать те, ют çынсене – пушшех те. Енчен те курайманлăх, тарăху туйăмĕ чылай вăхăт пухăнса пынă пулсан çакă ырăпа вĕçленместех. А.Степанов акă Пăртас ялĕнче пĕлтĕрхи кĕркуннеччен 15 çула яхăн пĕр хĕрарăм патĕнче пурăннă. Анчах амăшĕ вилнĕ хыççăн тăван килне ывăлĕ – С.Павлов – хăйĕн çемйипе куçнă. Çакă А.Степанова пачах кăмăла кайман, хайхискер пĕрмаях тарăхса-вĕчĕрхенсе çӳренĕ. Хут уйăрттармасăр пурăннă хĕрарăм çуртне хăй тивĕçлĕрех тесе шутланă ахăртнех. Темле пулсан та, иртнĕ кĕркунне ку килте хирĕçӳсем тухкалани паллă. Шăпах вĕсенчен пĕри хыççăн, пĕлтĕрхи сентябрĕн 22-мĕшĕнче, С.Павлов йывăр суранланнă, А.Степанов вара колоние лекнĕ.

Çак кун кăнтăрла С.Павлов кӳршисемпе урамра пулнă. Кĕçех вĕсем патне А.Степанов пырса тăнă, арçынсене сăрапа хăналанма сĕннĕ. Сăрапа анчах çырлахас темен – ушкăнран пĕри лавккана эрех туянма утнă. Тепри унччен киле кĕрсе тухас тенĕ те, пĕрпĕрне килĕштермен икĕ арçын кăна урамра юлнă, каллех çурт «пайлама» пуçланă. А.Степанов судра пĕлтернĕ тăрăх, С.Павлов ăна хĕнеме тытăннă, вăл хăраса кил хушшине кĕрсе тарнă. Тавăрас тĕллевпе арçын лаçран çĕçĕ илсе тухнă, С.Павлова çурăмран вăрттăн пырса чикнĕ. Лешĕ аманнине курсах çĕççе карта çине хунă та сарайне çывăрма кĕрсе выртнă.

Район сучĕ А.Степанова çынна çĕçĕпе чиксе йывăр суранлатнăшăн тивĕçлипе айăпланă, икĕ çуллăха пĕтĕмĕшле режимлă колоние яма йышăннă.

**Е.КОНСТАНТИНОВА,**
**Вăрнар район сучĕн председателĕ.**

НАРКОТĔРĔСЛЕВ

# Укçа вырăнне – тĕрме

**Раççей наркотĕрĕслевĕн республикăри управленийĕн сотрудникĕсен ушкăнĕ, ятарлă операци ирттерме хатĕрленнĕскерсем, пĕр каçхине Етĕрне хулине тухса кайнă. Вĕсен Мускавран килекен машинăна Никольски сали патĕнче кĕтсе илме тĕллев пулнă. Оперативлă информаци тăрăх, иномарка хуçи Чăваш ене наркотик кӳрсе килнĕ. Операцие управленин спецназ сотрудникĕсем, шырав ĕçĕсене пурнăçлакан йытă та хутшăннă.**

Каçхине кĕтнĕ водитель, строительство фирминче ĕçлекенскер, саккунсăр бизнеспа – наркотиксем кӳрсе килсе республикăра сарассипе – хăтланса пурăннă. Никольски çывăхĕнче çулса илнĕ вăхăтра унăн машининче, ятарлă вăрттăн вырăнта, оперативниксем 200 грамм гашиш (2000 дозăлăх) тупнă. Ку преступлени тĕлĕшпе уголовлă ĕç пуçарнă. Наркотике уйрăмах пысăк виçепе сутса вăл 200 пин тенкĕ енне тупăш тума ĕмĕтленнĕ. Çакăн вырăнне РФ Уголовлă кодексĕн 228-мĕш статйин 2-мĕш пайĕпе ăна 12 çул таран ирĕк прависĕр хăварма пултараççĕ.

Наркотĕрĕслев сотрудникĕсем кăçал кăна 12-мĕш наркопритона тупса тĕп тунă. «Ăнăççăр» хваттер хуçи – вăтăрти хĕрарăм – тăватă уйăх каялла кăна колонирен таврăннă.

Наркотик сутнăшăн тата притон тытса тăнăшăн ăна 4 çул та 5 уйăхлăха тĕрмене ăсатнă пулнă. Пысăк «стажлă» наркоманка хăйĕн пурнăçне улăштарма шутламан та. Колонирен тухсанах çĕнĕрен притон йĕркеленĕ. Çамрăк хĕрарăм хăйĕн хваттерне наркомансене пухнисĕр пуçне вĕсене наркотик хатĕрлесе сутнă. Наркополицейскисем хваттер хуçипе пĕрле пилĕк çамрăка тытса чарнă.

**Е.РОМАНОВА.**

# Наркотиксенчен хӳтĕлеме

Районта наркотика хирĕçле комиссин ларăвĕсем палăртнă йĕркепе иртеççĕ. Унăн ĕçне профилактика субъекчĕсен, вĕрентӳ тытăмĕн представителĕсем, сывлăх сыхлавĕн тата культура сферинчи ертӳçĕсем, шалти ĕçсен районти пайĕн сотрудникĕсем хутшăнаççĕ. Иртнĕ ларура акă наркотика хирĕçле комисси председателĕ, район пуçлăхĕ Анатолий Кузьмин, çамрăксене наркомани чирĕнчен хӳтĕлесси тĕп тĕллев пулмаллине палăртнă, профилактика ĕçĕшĕн яваплă çынсене çирĕпрех мерăсем йышăнмаллине каланă.

Диагностикăпа консультировани центрĕн директорĕ Г.Иванова шкулсенчи волонтерсен юхăмĕн аталанăвĕ çинчен пĕлтернĕ. Ятарлă вĕренӳре пулнă шкул ачисем-волонтерсем хăйсен тантăшĕсемпе наркотиксенчен хӳтĕленессипе занятисем ирттереççĕ. Психологсем ăнлантарнă тăрăх, çамрăксемпе ачасем пĕр ӳсĕмри тус-юлташĕсен асăрхаттару сăмахĕсене ытларах итлеççĕ, вĕсене тĕслĕх вырăнне хураççĕ.

Районти тĕп библиотека çумĕнчи «Контакт» медицинăпа психологи пулăшăвĕн центрĕн йĕркелӳçисем те ку сиенлĕ йăлапа кĕрешессине ĕçри тĕп задачăсенчен пĕри тесе йышăнаççĕ. Центр ĕçне шкулсен тата вăтам пĕлӳ паракан заведенисен вĕренекенĕсем хутшăнаççĕ. Врач-нарколог та час-часах «çавра сĕтел» тавра калаçусем ирттерет.

**Хамăр инф.**

